Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

16 (7549) № * Юн кун, 2008 çулхи февралĕн (нарăс) 27-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Районта**

## *Иван атте – 75 çулта*

Совет саманинче Муркаш районĕнче пĕр чиркӳ те ĕçлемен. Çакă çынсем Турра ĕненменнине пĕлтермен ĕнтĕ. Халĕ Мăн Сĕнтĕрте, Шатракассинче, Шурчара, Орининта, Уйкас Янасалта, Очăкассинче, Мăн Хураçкара чиркӳсем ĕçлеççĕ. Муркашра кĕлĕ çурчĕ уçăлчĕ.

Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕ пуринчен малтан чĕрĕлсе тăчĕ. Иван атте (Иван Григорьевич Ашмарин) кунта 1991 çултанпах вăй хурать. Прихут çыннисем ăна хисеплеççĕ.

Иван атте кăçал 75 çул тултарчĕ. Вăл Пĕтĕм Раççейри библи обществин активлă ĕçченĕ. Ял çыннисем хушшинче пысăк ĕç тăвать. Вĕсен кăмăл çирĕплĕхне, ĕненĕвне ӳстерессипе нумай тăрăшать. Çынсене йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать.



Дмитрий МЕДВЕДЕВ: «Чăваш Ен пек ăнăçлă ĕçлекен регионсене малашне те пулăшăпăр».

**Сăмах – район пуçлăхне**

# Пуласлăх хамăртан, хамăр тунă утăмран килет

***Вăхăт малтан мала васкать. Çакă хăех паянхи ĕçе ырана хăвармалла марри пирки калать. Сисмерĕмĕр те, ав, 2008 çулăн иккĕмĕш уйăхĕ те вĕçленсе пырать. Мĕнлерех пуçланчĕ çĕнĕ ĕç çулталăкĕ пирĕн район çыннисемшĕн? Иртнĕ çулхи ӳсĕмсемпе йывăрлăхсем паян мĕне тĕпе хурса вăй хума ыйтаççĕ? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район пуçлăхĕнчен Ю.А. ИВАНОВРАН.***

**– Юрий Александрович, иртнĕ çул промышленность предприятийĕсем ăнăçлă ĕçлерĕç. Кăçалхи январь уйăхĕнче мĕнле утăмсем турĕç асăннă отрасльте?**

– Промышленность предприятийĕсенче вăй хуракансем çулталăка ӳсĕмлĕ ĕçпе пуçларĕç. Пĕтĕмпе январьте 107905,6 пин тенкĕлĕх продукци кăларса реализациленĕ. Урăхла каласан, кăтартăва иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 2,2 хут ытла ӳстернĕ. Уйрăмах «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен уçă обществи, «Сеспель» чикĕллĕ яваплăхлă общество ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. Вĕсем малтанхинчен икĕ хут çурăна яхăн ытларах продукци кăларса реализацилерĕç: 272 процент тата 261,5 процент. Çавăн пекех «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă обществи, «Милград» чикĕллĕ яваплăхлă общество ( вĕсем те ĕç кăтартăвне 2 хут ытла ӳстерчĕç) тата ытти предприятисем ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

**– Ял хуçалăхĕнче мĕнле ĕмĕт-тĕллевпе вăй хураççĕ паян?**

– Тӳрех каламалла, çăмăл мар паян ял ĕçченĕсене. Апла пулин те, ял ĕçченĕсем умри тĕллевсене пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнче ял хуçалăх продукцине 24117,4 пин тенкĕлĕх туса илнĕ. Е иртнĕ çулхи çак уйăхринчен 5,8 процент ытларах. Ял хуçалăхĕнчи лару-тăрăва лайăхлатмалли çулсем пур. Тыр-пул тухăçне ӳстермелли çул-йĕрсенчен пĕрне хуçалăхсем кĕркуннех пурнăçа кĕртме тăрăшрĕç. Ял хуçалăх предприятийĕсем кĕрхи культурăсене виçĕм çулхинчен 41 процент ытларах лаптăк çинче акса хăварнă. «Ударник», Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Свобода», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенче кĕрхи культурăсен лаптăкĕсене уйрăмах пысăклатрĕç. Çавăн пекех кĕрхи çĕртмене те 2006 çулхинчен 40 процент ытларах лаптăк çинче турăмăр.

Паян ял хуçалăх предприятийĕсем çур акине хатĕрленеççĕ. Çавăнпа та вырăнсенче лайăхрах ĕçлеме май паракан пур мелсене те пăхса тухмалла. Пытарма кирлĕ мар, ура çинче çирĕп тăрайман хуçалăхсем те çук мар паян. Çав хуçалăхсен, халăхпа тĕплĕн калаçса, йĕркеллĕ аталанакан хуçалăхсемпе пĕрлешсе ĕçлесен вырăнлă пулмалла. Тĕслĕхрен, Чкалов яч. хис. хуçалăхпа Чапаев яч. хис., Суворов яч. хис. хуçалăхпа «Агроурожай» хуçалăх пĕрлешсен аталану çулĕ уçăмлăрах пулмалла. Йывăртарах лару-тăрура пурăнакан ытти хуçалăхсенче ĕçлекенсен те çак ыйту тавра тарăннăн шутламалла.

Выльăх-чĕрлĕх сферинче те ырă утăмсем пулмарĕç мар. Кăçалхи январьте те иртнĕ çул тунă утăмсенчен чакмарăмăр. Пурĕ 461,3 тонна аш-какай е иртнĕ çулхи пĕрремĕш уйăхран 4,8 процент ытларах туса илтĕмĕр. Сĕте çак хушăра 3373,2 тонна, урăхла каласан, иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 9,3 процент ытларах туса илнĕ. Кашни ĕнерен вăтамран 312 килограмм сĕт сунă. Кăтартăва 16,3 процент чухлĕ ӳстернĕ.

Муркашри чăх-чĕп фабрики яланхи пекех йĕркеллĕ ĕçлесе пырать. Кăçалхи январьте кунта кашни чăхран 27 çăмарта илнĕ. Пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 3,4 процент чухлĕ ӳстерме пултарчĕ коллектив хăйĕн кăтартăвне.

**– Юрий Александрович, ытти отрасльсенче кăçалхи малтанхи кăтартусем еплерех пулчĕç?**

– Ваккăн сутмалли таварçаврăнăш планне илес пулсан, çакна палăртмалла. Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсем аталану çулĕпе малалла утаççĕ. Кăçалхи январьте ваккăн сутмалли таварçаврăнăш планне пурĕ районта 42727,3 пин тенкĕлĕх (133,3 процент) пурнăçланă. Таварçаврăнăш Муркаш райповĕпе 35,6 процент, Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 27,8 процент чухлĕ хăпарчĕ.

Халăха тӳлевлĕ пулăшусем 3565,5 пин тенкĕлĕх панă. Кăтартăва 9,4 процент чухлĕ хăпартнă. «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» МУП, «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество 2007 çулхи çак вăхăтринчен ăнăçлăрах ĕçлерĕç.

Кăçал кашни ял патне çулсене тăвассине вĕçлемелле. Çав шутран пĕлтĕр вак чул сарнă çулсене те кăçал асфальтпа сарса пĕтермелле.

Асăннă ĕçсене пурнăçланипе пĕрлех паян ялсем хушшине асфальт çул сарас ĕç пирки шутламалла. ЧР Президенчĕ ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура та çакна уйрăммăн палăртнă, 2015 çулччен çак программăна та пурнăçа кĕртсе пĕтермелле. Çавăн пекех район центрĕнчи физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплексра ĕçсене вĕçлемелле, ку объекта Республика кунĕнче хута ямалла.

Иртнĕ çул Юнкăра пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ уçăлчĕ, пĕтĕмпе вĕсен йышĕ 7 çитрĕ. Кăçал вара Республика кунĕнче Шетмĕпуçĕнче çакнашкал тепĕр уйрăм уçăлмалла. Районта тĕслĕхлĕ библиотекăсем 30 çитрĕç. Ку ял çыннишĕн мĕн тери паха иккенне халь лайăх пĕлетпĕр. Çавăнпа та кăçал ЧР Президенчĕн тепĕр Указĕпе килĕшӳллĕн ялсенчи Культура çурчĕсене тĕслĕхлĕ туса хурассипе çине тăрса ĕçлемелле пулать.

Районта халăха çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе тĕрлĕрен программăна пурнăçлатпăр. Кăçал ку тĕлĕшпе те пирĕн ытларах тимлемелле.

Юлашки çулсенче пирĕн çĕршывра, республикăра ача пур çемьесене, социаллă хӳтлĕх кирлĕ çемьесене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Районта пурăнакансем те малашлăха шанчăкпа пăхма пуçларĕç. Çакна районта ачасем ытларах çурални те çирĕплетсе парать. Кăçалхи январьте акă районта 28 ача çуралнă. Кăçалхи январьте ĕçсĕррисен йышĕ те 10 процент чухлĕ чакнă.

**– Юрий Александрович, халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассинче наци проекчĕсене пурнăçа кĕртни те пысăк витĕм кӳчĕ. Сирĕн шухăша пĕлес килет ку тĕлĕшпе.**

– «АПК аталантарасси» наци проекчĕ ял çыннисен пурнăçне те, йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ ял хуçалăх предприятийĕсен пурнăçне те çăмăллăхсем илсе килчĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилесе, çĕнĕ технологи çине куçмалла – акă мĕнле тĕллев пулмалла паян ял хуçалăх предприятийĕсен. Ку вара выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах туса илме, ял хуçалăхĕнчи кадрсен ыйтăвне татса пама та пулăшать.

Районти хуçалăхсем 2007 çулта кредитсене пĕтĕмпе 50 миллион тенке яхăн илчĕç. Ильяч яч. хис., Суворов яч. хис., «Свобода», «Ударник», «Герой» хуçалăхсем унпа эффективлă усă курчĕç. Ку тĕлĕшпе кăçал татах та хастартарах пулмалла.

«АПК аталантарасси» наци проекчĕ çавăн пекех уйрăм хушма хуçалăхсене аталантарма ялта пурăнакансене çăмăллатнă кредит илме майсем туса пачĕ. Пирĕн районта пурăнакансем хушма хуçалăха аталантарма иртнĕ çул 153591 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ. Ку вăл республикăри чи лайăх кăтартусенчен пĕри. Асăннă наци проекчĕ пурнăçа кĕме пуçланăранпа вара патшалăх паракан çак çăмăллăхпа пурĕ 1772 çемье 275745 пин тенкĕлĕх илнĕ. Ку вăл кăçал илнĕ кредитсене шутламасăр. 2008 çулхи январьте 27 çемье 4254 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ.

Асăннă наци проекчĕ ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелеме те çулсем уçса пачĕ. Паянхи куна районта пурĕ 18 ял хуçалăх потребительсен кооперативне йĕркеленĕ, 7 кооператив аккредитаци витĕр тухнă. Кăçал ку тĕлĕшпе тата та тăрăшса ĕçлемелле. Кашни ял тăрăхĕнчех пулмалла вăл.

«Вĕрентӳ» наци проекчĕ те вĕрентӳпе воспитани ĕçне 2007 çулта татах та çӳллĕрех шая çĕклеме май пачĕ. Нискассипе Москакасси шкулĕсем РФ Президенчĕн Грантне – 1 миллион тенке, Муркаш шкулĕ ЧР Президенчĕн Грантне – 200 пин тенке тивĕрĕç. Уйрăм вĕрентекенсенчен Йӳçкасси шкулĕнчи историпе обществознани учителĕ В.И. Тихонов РФ Президенчĕн премине 100 пин тенке тивĕçрĕ, «Солнышко» ача сачĕн воспитательници О.В. Прокопьева ЧР Президенчĕн премине –10 пин тенке. Наци проекчĕпе класс ертӳçисене укça хушса тӳлеççĕ. Çавăн пекех пултаруллă вĕрентекенсене хавхалантармалли ытти мелсене те уçса пачĕ наци проекчĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Республикăра**

## *Кубок ячĕпе – кĕмĕл укçа*

РФ Тĕп банкĕ Шупашкарта хăвăрт утассипе иртекен Тĕнче кубокĕ ячĕпе çĕнĕ кĕмĕл укçасем кăларассине пĕлтернĕччĕ. Кубок май уйăхĕнче пулассине вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Виçĕ тенкĕлĕх кĕмĕл укçасем вара март уйăхĕнче тухаççĕ. Тимĕр укçана тума 925 пробăллă шăранчăкпа усă кураççĕ. Укçа 31,1 грамм туртать. Ăна пилĕк пин экземпляр кăлараççĕ.

Укçан пиччен енче икĕ пуçлă ăмăрт кайăк, тӳнтер енче – утакан икĕ спортсмен тата «Кубок мира по спортивной ходьбе», «г. Чебоксары» тесе çырнă.

## *Шăмăршăсем лайăх ĕçлеççĕ*

Иртнĕ эрнере ЧР Президенчĕ НВ. Федоров Шăмăршă районĕнче пулчĕ.

Президент кунти «Елочка» санаторири пушар депоне КамАЗ автомашина никĕсĕ çинче тунă автоцистерна парнеленĕ. Карапай Шăмăршă шкул ачисем спортпа туслăран хоккей формине тивĕçнĕ.

Шăмăршăсем лайăх ĕçлеççĕ, çавăнпа вĕсене пулăшатпăр, тенĕ президент.

Района унччен уйăрнă трансфертсем çумне тата 23 миллион тенкĕ панă.

Кунта асфальтпа бетон заводне çĕнетеççĕ. Апла çул-йĕр тăвасси хăвăртланĕ. Çĕнетекен район больници республикăра чи лайăх пулмалла.

## *5 пин яш салтак аттине тăхăнĕ*

«Ытти çулсенче çуркуннехи-çуллахи призыв тапхăрĕ çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕччен пыратчĕ, кăçал 15-мĕш тĕлне вĕçлесшĕн», – салтак ретне тăмалли йĕркепе паллаштарнă май пĕлтернĕ Чăваш Ен комиссарĕ А. Мокрушин.

2008 çулта çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн яшсем хĕсметре пĕр çул анчах тăрĕç. Çавна шута илсе нумай çăмăллăха пĕтернĕ. Калăпăр, çемье пуçлăхĕн виçĕ çула çитмен ачи пулсан та салтак атти тăхăнма тивĕ. Çавăн пекех мăшăрĕ йывăр çын е ашшĕ-амăшĕ пенсионер пулнине те шута илмĕç.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, çуркунне – 2 пин, кĕркунне 3 пин чăваш каччи салтак аттине тăхăнĕ.

**Асăрхаттаратпăр**

## *Налуксене вăхăтра тӳлемелле*

Налук инспекцийĕнче Муркаш район администрацийĕн, Пенси фончĕн ку районти управленийĕн тата прокуратурăн представителĕсем хутшăннипе пурăнмалли минимумран кая мар ĕç укçи тӳлес тата налук куçарас ыйтусене сӳтсе явнă.

Ларура çынсем илекен ĕç укçинчен налук тӳлемен предприятисене палăртнă. Çак предприятисен бюджет умĕнчи парăмĕ 100 пин тенкĕ ытла: «Муркашрайбыт» юлташлăх, «Волга», Чапаев яч.хис., «Ручей», «Герой», Суворов яч. хис., Ленин яч.хис., К.Иванов яч.хис. хуçалăхсем.

Саккунпа килĕшӳллĕн çак налука ĕç укçи париччен куçармалла е тепĕр кунне. Анчах пурте налук саккунĕсене йышăнасшăн мар.

Асăрхаттарас килет, саккунсене пурнăçламасан явап тытма тивет.

Малашне налуксене пурте вăхăтра тӳлессе шанса тăратпăр.

**С. ИГНАТЬЕВА.**

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Кукамая, хунямана, çывăх тăванăмăра – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Антонина Ивановна ДАНИЛОВАНА** 90 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Сана юбилей ячĕпе саламласа мĕн пур ыррине кăна сунатпăр, яланах çирĕп сывлăхлă пул.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Катькасра пурăнакан **Евгений Пантелеймонович ИЛЛАРИОНОВА** 50 çулхи юбилейĕ ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Пурнăç çулĕ тикĕс, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, сывлăху чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр, ăнăçу çумран ан кайтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, кинĕ, виçĕ ывăлĕ тата Мазиковсен, Егоровсен, Черновсен, Лаптевсен çемйисем.**

## Çырăнтару – 2008
## Малтанхи хакпа çырăнăр

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июнь уйăхĕнчен илсе тăма февральте малтанхи хакпа çырăнтараççĕ.**

**Ултă уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Район хаçатне хакланиччен çырăнса илĕр!**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**